Обязат. экз.



# Поэзипе поэтсем çинчен

Сăвăлла çыру (эпистола) уйрăм жанр пек чи малтан антика поэзийĕнче тĕл пулать (Гораций, Овидий), кайран вăтам ĕмĕрсенче тата Чĕрĕлӳ тапхăрĕнче çĕнĕ Европа чĕлхисемпе те аталанать. Вырăс поэзийĕнче Сумароков, Жуковский, Пушкин тата ытти сăвăçа та сăвăлла çыру тĕслĕхĕсем ăсталанă. Çак жанрăн тĕп уйрăмлăхĕ – автор ятарлă çын ячĕпе сăмах тытни, хăш-пĕр чухне адресат пĕр-пĕр ушкăн та пулма пултарать е пĕтĕм тăван халăх.

Петĕр Хусанкай сăвăлла çыру жанрĕпе 20-30-мĕш çулсенче час-час усă курать. Поэт унта хăй çинчен, хăйĕн поэзири тивĕçĕпе вырăнĕ пирки шухăшлать, литературăри лару-тăрăва, унăн çитĕнĕвĕсене хак парать, юлташ-сăвăçсенчен шӳтлесе тăрăхлать е кăштах кулса илет. П.Хусанкай сăвăлла çырăвĕсенче чăваш сăмахĕн малашлăхĕ пирки те ĕмĕтленет.

*Эп хам та халь, пăртак пуçа йăтсассăн,*
*Йĕрес пек ӳкĕтлетĕп хама хам:*
*Илтетни эс – мĕскер юрлать ав масса,*
*Куратни эс – ялав илемĕ кам?*

(«Ку чух поэт пулмашкăн йывăр мар-тăр...», 1927)

*Мĕнле чĕлхепе, кам сăвви-юррипе*
*Тĕнче янăрăвне ĕнеретпĕр малтан?*

(Çыру, 1934)

П.Хусанкайăн çав тапхărта сăвăлла çыру хурăмĕпе хайланă паллăрах текстсем çаксем пулаççĕ: «Тĕппи курки» (Васанккапа Титова) – 1927, «Çурхи октавăсем» (1928), «Тĕлĕнмелле тĕлĕк» (1930-1931), Г.Т.Алентее (1931), «Кĕли Кĕркурине» (1931), «Чăваш калавçине – Петĕр ывăлне Мĕтри Юмана – «вак буржуаллă» сăвăçран Хусанкайран – уçă çыру (1930), «Хупă çыру» (1931), «Кĕрхи кĕреке» (1932). Вĕсенчен чăваш сăмахлăхĕнче хăварт сарăлнă тата паларса юлнă хайлав «Шелепийĕн шерепи» (1936) уйрăлса тăрать. Кунти персонажсем 30-мĕш çулсенчи чăваш çыравçисем (пурте тенĕ пек), кашнинпе автор «паллаштарать», вара кĕске характеристика е сĕнӳ парать. Хайлав тĕллевне палăртса П.Хусанкай ăна хушма ят та парать («Писательсемпе поэтсен парачĕ»).

Халĕ эпир «Тăван Атăл» вулаканне çак поэмăн чи малтанхи вариантне сĕнетпĕр. Вăл 1936 çулта «Канаш» хаçатра №113 (4324) кун çути курнă.

**Атнер Хусанкай**